Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи майăн 5-мĕшĕнчен пуҫласа тухать

62 (7702) № ✻ Юн кун, 2009 ҫулхи августăн (ҫурла) 5-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Вырма – 2009

## Кĕрхи пусăра вырма вĕҫленет




Кăнтăр иртсен хĕрӳ вырма пыракан кĕрхи тулă хирне ҫитрĕмĕр. Паян уяр кунăн кашни минучĕ-сехечĕпе туллин усă курса тыră вырмалла. Кĕрхисем пиҫсе ҫитнĕ ĕнтĕ. Вĕсем тулли пучаххсемпе пуҫ усса ҫĕр ĕҫченне хăйсем патне чĕнеҫҫĕ. Хăшпĕр пусăри тырра аланипех кĕлете хума пулать, мĕншĕн тесен вĕсем пиҫсе ҫитнипе пĕрлех типĕ те. Ҫакă вăл хакланнă тырăн хăйхаклăхне чакармалли пĕр ҫул. Ĕҫре кунашкал кашни мелпе туллин усă курсан хуҫалăхсен экономики те тĕреклеНĕ, аталану та вăй илĕ, пурнăҫ условийĕсем те юсанĕҫ.

Эрне каялла Суворов яч. хис. хуҫалăхра та вырмана тухрĕҫ. Пĕтĕм хуҫалăх пĕрремĕш кунранах ҫак ответлă ĕҫе пĕр ҫын пек кӳлĕнчĕ. Виҫĕ «хир карапĕ» иртен пуҫласа сĕм тĕттĕмченех ылтăн тĕслĕ тыră пуссинче.

– Ăнса пулнă тырăна пуҫтарса илесси – пирĕн пĕрлехи ответлăх. Юнкă территорийĕнче акнă 457 гектар «московская-39» кĕрхи тулăна 4 кунтах ҫапса илтĕмĕр. Халĕ иккĕмĕш кун хамăр хуҫалăхри пусăсенче. Тухăҫ 30 центнертан иртни савăнтарса ĕҫлеттерет, – терĕҫ пирĕнпе калаҫма комбайн ҫинчен аннă Ю. Орлов пулăшаканпа Р. Кузнецов комбайнер тĕп ĕҫ малта пулнине палăртса, хуҫалăх агрономĕ Г. Албутова ҫине кăмăллăн пăхса **(сăн ӳкерчĕкре)**. Юнкă территорийĕнче тенĕрен, Анаткассисем Турай тăрăхĕнчи пушă вырткан ҫĕрсене те пĕлтĕр 150 гектар «третикале» ыраш акса хăварчĕҫ. Паян-ыран вырма ĕҫĕсем унта та ҫитмелле. Сăмах май, ҫак кунсенче хуҫалăх кĕрхи культурăсене вырса кĕртес ĕҫе вĕҫлет.

Суворов яч. хис. хуҫалăхăн кăҫалхи вырмара пĕтĕмпе 1267 гектар (вĕсенчен 794-шĕ кĕрхи культурăсем) ҫинче тыră-пулă пуҫтарса кĕртмелле. Хуҫалăхăн йĕтемĕ ҫине кĕресех ҫĕнĕ тырăна алакан ушкăн хĕрӳ ĕҫрине куртăмăр. Аслисем машина ҫине типĕтнĕ тырăна тиетчĕҫ пулсан, 10 ачаран тăракан ҫамрăк бригада хиртен килнĕ тырăна алассипе вăй хуратчĕ. «Ҫынсем пурте пĕр шухăшĕмĕтлĕ пулни, хушнă ĕҫрен пăрăнманни малтуртăмлă ĕҫлеме хавхалантарать, ыранхи пирки шухăшлаттарать. Акă вырма ҫитнипех кĕр аки пирки те самантлăха та манмастпăр. Паян ҫĕр хатĕрлессипе А. Иванов, И. Васильев, В. Никандров, В. Яковлев, В. Добрянский механизаторсем икĕ сменăпа ĕҫлеҫҫĕ. Вăхăтра иртернĕ кĕр аки пысăк тухăҫ никĕсĕ пулнине пирĕн ыттисемпе пĕрле эпир те ăнланса илтĕмĕр. Кăҫал ăна 735 гектар ҫинче акса хăварма ĕмĕтсем пур. Ҫĕрĕсем те ҫу каҫа пăхса тăнăран хатĕрпе пĕрех. Ĕлкĕрсе юласчĕ ҫеҫ», – тет паян хиртен кĕме пĕлмен Галина Никандровна Албутова агроном. Ҫирĕп алăри «хир карапĕ» вара кĕрхи тулă пуссинче ҫаврăм хыҫҫăн ҫаврăм тăвать. Комбайн хыҫҫăн ҫапса тĕшĕлемен пучах юлмасть.

Ҫав кун пиҫсе ҫитнĕ ыраша кĕрхи тулă пуссисенче вырма вăхăчĕ пынине сиссе терсе ăрша вылятчĕ. Паян та уяр. Анчах татăкăн-татăкăн ăмăр пĕлĕтсем кунсерен кĕр вăй илнине евитлеҫҫĕ.

**А. БЕЛОВ.**

Кăтартусем

## Уй-хирте ĕҫ шавĕ тăрать

**Ҫĕр ĕҫченĕ паян иртен пуҫласа каҫченех тыра-пулă пуссинче тата йĕтемсем ҫинче. Кашни ушкăн хăй ĕҫне вăхăтра пурнăҫлассипе тăрăшать. Вырмари ĕҫ йĕркелĕвне тивĕҫлĕ шайра тытакансен хирĕсем ăмăртмалла тенĕ пек тырăран тата улăмран тасалса пырăҫҫĕ. Хуҫалăхсем паян пĕтĕмĕшле кĕрхи культурăсем ҫинче вăй хунăран кунти вырмана вĕҫлесе пыракансем те пур. Ильич яч. хис., Чкалов яч. хис., «Оринино», «Восток», Суворов яч. хис., «Ударник» хуҫалăхсенче вырма ĕҫĕсене лайăх йĕркелени сисĕнет. Августăн 4-мĕшĕ тĕлне вĕсем пĕрлехи тăрăшулăхпа 1768 гектар (60 процент) ҫинчи кĕрхи тулăна, 103 гектар ҫинчи ыраша (23 процент) ҫапса та илнĕ ĕнтĕ. Йĕтемсем айне ҫак лаптăксенчен 4622 тонна тыра кĕнĕ. Малтанхи кунсенчи ĕҫсене пăхсан тыр-пулăн вăтам тухăҫĕ 24 центнерпа танлашать. Хирсенче ĕҫленĕ 40 «хир карапĕ» хыҫҫăн 1060 гектар (55 процент) ҫинчи улăма пухса та тирпейленĕ.**

**Хальлĕхе чи пысăк вăтам тухăҫ Чкалов ячĕпе хисепленекен хуҫалăхра – гектартан 33,5 центнер. Исетерккĕсем 41 гектар ҫинчен (52 процент) ҫурхи тулăна та вырса кĕртнĕ.**

**«Герой» хуҫалăхра 3 гектар, «ДаАн» обществăра 4 гектар ир пулакан ҫĕр улми кăларнă.**

**Кĕрхи культурăсем акма 3093 гектар ҫĕр хатĕрленĕ. 405 гектар ҫинче ҫĕртме сухи тунă.**

**Хамăр инф.**

Сывлăх

## Сывлăх малти вырăнта пултăр

Кашнин хăйĕн сывлăхне упрасси, тĕрĕслесе тăрасси малти вырăнта пулмалла. Медосмотр-и вăл е диспансеризаци – пур тĕрĕслеве те вăхăтра иртгерни хамăршăнах усăллă.

Диспансеризаци сывлăха анлăрах тĕрĕслеме май панине пĕлетпĕр ĕнтĕ. Кăҫал та ҫак тĕрĕслев витĕр районта пурĕ 871 ҫынна кăларма палăртнă. «Муркаш районĕн тĕп больници» муниципаллă сывату учрежденийĕн поликлиника ертӳҫи А.П. Чиновникова пĕлтернĕ тăрăх, хальлĕхе вĕсенчен 522 ҫыннăн диспансеризаци пĕтĕмлетĕвĕсем паллă.

Пĕрремĕш ушкăна сывă ҫынсене кĕртеҫҫĕ. Кăҫалхи ҫичĕ уйăхра тĕрĕсленнисенчен кунашкаллисем пурĕ 128 ҫын пулнă. Иккĕмĕш ушкăнра – чире пуҫарма пултаракан факторсемпе ҫывăххисем. Ҫак ушкăна кĕрекен 27 ҫынна тупса палăртнă. Виҫĕмĕш ушкăнра чирлисем кĕреҫҫĕ (организмра чир паллисем пуррисем) – 352 ҫын. Тăваттăмĕш ушкăнра - стационарта сиплемелли чирсемпе чирлекенсем тата хаклă та ҫӳллĕ шайри технологиллĕ медицина пулăшăвĕ кирлисем. Кусем пурĕ 14-ăн. Тепĕр ушкăна шаларах кайнă чирсемпе чирлекен пĕр ҫынна кĕртнĕ.

Диспансеризаци ҫынсен сывлăхне тĕрĕслесе тĕрлĕ чирсене пуҫламăш тапхăртах тупса палăртма май парать. Ăна пысăк квалификациллĕ специалистсем иртгереҫҫĕ, ĕҫсене паха пурнăҫлама кирлĕ йышши медицина оборудованийĕ те пур. Анчах та юлашки вăхăтра, ял хуҫалăх предприятийĕсем пĕтсе пынă май, диспансеризаци тăратассинче те йывăрлăхсем пурине пĕлтерчĕ Алина Петровна. Обязательлĕ медицина страховани фончĕ тăратнă списоксем тăрăх ĕҫлеҫҫĕ специалистсем. Хăшĕсем январĕн 1-мĕшĕ тĕлне хуҫалăхсенче ĕҫлекенсен шутĕнче пулнă пулсан, халĕ вара ĕҫсĕррисен шутĕнче. Ҫапла вара кам ăҫта кайса ĕҫлес тет, ҫавăнта каяҫҫĕ. Вĕсене тупма та хĕнрех.

Кашни участока 60-шар ҫынна ҫирĕплетсе панă. Апла вырăнсенче тăрăшнинчен те нумай килет. Поликлиника ертӳҫи ҫак ĕҫре аван ĕлкĕрсе пыракансене те палăртрĕ – Чуманкассинчи тата Уйкас Янасалти участоксем вĕсем. Муркашри, Орининти тата Турайĕнчи участоксем те хăйсен ĕҫ кăтартăвĕсемпе ыттисенчен маларах пыраҫҫĕ.

**(Вĕҫĕ 4-мĕш стр.).**

Кун йĕркинче

## Хĕрсех хĕле хатĕрленеҫҫĕ

***Ҫу кунĕсем ҫав тери хăвăрт иртеҫҫĕ. Сисмесĕрех кĕр кунĕсем ҫитĕҫ. Районти энергетика тата пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăх объекчĕсене кĕркунхехи тата хĕллехи тапхăра хатĕрлес тĕлĕшпе район пуҫлăхĕ майăн 26-мĕшĕнчех 316-мĕш номерлĕ йышăну кăларнăччĕ. Унпа килĕшӳллĕн ятарлă ĕҫ комиссине, ĕҫ планне ҫирĕплетнĕ.***

***Мĕнле пырать-ха паян асăннă объектсене хутса ăшăтмалли тапхăра хатĕрлесси? Ҫакăн ҫинчен тĕплĕнрех калаҫа пама эпĕ калаҫăва район администрацийĕн пуҫлăхĕн ҫумне, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăх управленийĕн ертӳҫине В.Г. Никитина чĕнтĕм.***

– Пирĕн районта уйрăм ҫынсен ҫурчĕсем пурĕ – 13442. Кил хуҫисем вĕсене хĕле хатĕрлессипе, паллах, хăйсем ĕҫлеҫҫĕ. Муниципаллă нумай хваттерлĕ ҫуртсем вара пĕтĕмпе – 146. Асăннă ҫуртсене тытса тăма пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăха реформăлама пулăшакан фонд урлă кăҫал Раҫҫей Федерацийĕн бюджетĕнчен 7 миллион та 600 пин тенкĕ килчĕ. Унсăр пуҫне республика бюджетĕнчен 1 миллион та 500 пин тенкĕ, ҫавăн чухлех район бюджетĕнчен уйăрчĕҫ. Ҫурт хуҫисем куҫарнă сумма 559 пин тенкĕпе танлашрĕ. Ҫапла майпа 9 ҫурта тĕплĕн юсарăмăр. Тĕпрен илсен, ҫурт тăррисене ҫĕнĕрен витрĕҫ, подъезд, путвал алăкĕсене тимĕррисемпе улăштарчĕҫ тата ытти ĕҫсене турĕҫ. Электрохуҫалăхра та юсамалли-улăштармалли ҫителĕклех пулчĕ.

Асăннă программăна кăҫал эпир пĕрремĕш хут хутшăнтăмăр. Ҫакăн усси пысăк пулнине халь ҫеҫ асăннă цифрăсем те кăтартса параҫҫĕ. Пĕлтĕр вара муниципаллă ҫуртсене юсама укҫа-тенкĕ район бюджетĕнчен кăна панă: пĕтĕмпе 1 миллион та 71 пин тенкĕ.

**– Владимир Германович, районта котельнăйсем те сахал мар. Вĕсенче лару-тăру епле?**

– Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăхсем паян 20 котельнăя пăхса тăраҫҫĕ. Унсăр пуҫне шкулсен балансĕсем ҫинче те пур вĕсем, культура учрежденийĕсен те, медицина учрежденийĕсен те хăйсен топочнăйĕсем пур. Хутса ăшăтмалли иртнĕ тапхăршăн бюджет предприятийĕсем ҫут ҫанталăк газĕшĕн пĕтĕмпех тӳлесе татнă. Хутса ăшăтасси тăкаклă пулнине пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăхсем йывăрлăха кĕрсе ӳкрĕҫ. Мăн Сĕнтĕрсем юлнă 200 пин тенкĕне август уйăхĕнче тӳлесе татма палăртнă. Муркашсем вара ку ыйтăва татса пама кредит илчĕҫ. Хатĕрленӳ ĕҫĕсем икĕ предприятире те йĕркеллех пыраҫҫĕ: хурансене, кранcене, счетчиксене тĕрĕслеҫҫĕ. Кирлĕ пулсан, юсаҫҫĕ, улăштараҫҫĕ. Августăн 15-мĕшĕнче комисси пĕрремĕш тапхăрти тĕрĕслевсе тухать, асăннă объектсене хатĕрлесе ҫитернипе ҫитерменнине тишкерет.

**– Районти газ, шыв парса тăракан объектсемпе электрохуҫалăха ку енĕпе епле хак панă пулăттăр?**

–Электричество линийĕсем районта пĕтĕмпе 1300 ҫухрăма яхăн. Ялсенче вĕсене «Чăвашэнерго» акционерсен усă обществин ĕҫченĕсем пăхса тăраҫҫĕ, Муркашпа Мăн Сĕнтĕрте – кунти пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăхсен электрикĕсем. Хатĕрленӳ ĕҫĕсем кунта та пыраҫҫĕ: линисене ҫĕнетеҫҫĕ.

Газ пăрăхĕсем вара районĕпе 859 километр. Газ валеҫекен пунктсене «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ пăхса тăрать. Газ пăрăхĕсене тӳрлетсе, сăрласа, ҫавăн пекех килсенчи газ приборĕсене вăхăтвăхăт тĕрĕслесе-пăхса тăраҫҫĕ.

Шывпа тивĕҫтерессипе вара йывăрлăхсем ҫук мар. Башнясем паян тĕрлĕ хуҫа аллинче. Хăш ҫĕрте ял хуҫалăх предприятийĕсен балансĕсем ҫинче вĕсем, хуҫасăррисем те пур. 131-мĕш федераллă саккунпа килĕшӳллĕн шывпа тивĕҫтерессипе ял тăрăхĕсен тивĕҫĕ пулса тăрать. Паян башнясене вĕсен балансĕсем ҫине куҫарас ĕҫ пырать. Хăвăртрах ҫак ĕҫе вĕҫлесе, вĕсене договорпа ятарлă специализациленнĕ предприятисем пăхса тăмалла тумалла. Халăх вăхăтра шывшăн тӳлеменнине пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăхсем пăхса тăракан ҫĕрте те кулленхи ыйтусем тухса тăраҫҫĕ. Пĕтĕмĕшле вара хĕллехи тапхăра хатĕрленӳпĕр ку енĕпе те.

Шыв тасатмалли сооруженисенче те хĕллехи тапхăра хатĕрленсе профилактика ĕҫĕсене тăваҫҫĕ. Вĕсем пирĕн пĕтĕмпе 4: Муркашра, Мăн Сĕнтĕрте тата Москакассинче.

**– Тавах, Владимир Германович, калаҫушăн.**

**Л.ПАВЛОВА калаҫнă.**

Саламлатпăр!



Ылтăн-кĕмĕлрен те хаклăрах, хăвелтен те ăшăрах аннене – Чурикасси ялĕнче пурăнакан **Клеопатра Романовна ИЛЬИНАНА** августăн 2-мĕшĕнче 75 ҫул тултарнă ятпа саламлатпăр. Хаклă аннемĕр, эсир пире пурнăҫ парнелерĕр, ура ҫине ҫирĕппĕн тăратрăр, пурнăҫ ҫулĕ ҫине тухма ырă канашсемпе пулăшрăр. Юман пек ҫирĕп сывлăх, вăрăм кун-ҫул, ҫăл куҫ пек тапса тăракан вăй-хал сунатпăр. Ҫирĕп сывлăхлă пулса ачăрсене, мăнукăрсене савăнтарса пурăнмалла пултăр. Тайма пуҫ сана пуриншĕн те.

**Салампа: мăшăрĕ, 4 хĕрĕ, ывăлĕ, кĕрӳшĕсем, 6 мăнукĕ, тăванĕсем.**

ҪЫРĂНТАРУ

**Хаклă вулакансем! Районти «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫата 2010 ҫулхи пĕрремĕш ҫур ҫулта илсе тăма унчченхи хакпах ҫырăнтараҫҫĕ. Ултă уйăха ҫырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**